25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 МАЙ 5 ЫТЛАРИКУН 102(6037) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Çивĕч те хăватлă хĕçпăшал

Большевиксен партин хаçачĕ «Правда» тухма пуçланăранпа паян 30 çул тултарать. «Правда» хаçат çуралнă куна — майăн 5-мĕшне—пирĕн çĕршывра большевикла пичетĕн кунĕ тесе уявлама йышăннă.

30 çул хушши ĕнтĕ «Правда» хаçат халăхсем хушшинче большевикла чăнлăха сарса пырать, çав чăнлăхăн çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешет, пирĕн халăхпа пирĕн тăван çĕршывăн тăшманĕсене пĕр хĕрхенмесĕр тăрă шыв çине кăларса, хĕртнĕ тимĕрпе çунтарса пырать, ĕççыннисене социализм строительствин çĕнтерĕвĕсене малалла ÿстерсе пыма, çав çĕнтерÿсене хÿтĕлеме мобилизацилет. «Правда» хаçат пирĕн аслă çĕршыври миллионшар тиражпа тухакан хаçатсене ĕçре большевикла пример кăтартса пырать. «Правда» хаçатран социализмлă çĕршыври мĕнпур хаçатсем массăсен коллективлă организаторĕ пулма, парти аллинчи çивĕч те хăватлă хĕçпăшал пулса тăма вĕренеççĕ.

Кăçалхи çул пичет кунне эпир совет халăхĕ нимĕç захватчикĕсене хирĕç отечественнăй аслă вăрçă туса пынă хаяр тапхăрта палăртатпăр. Вăрçă условийĕсенче большевикла пичетĕн вырăнĕ татах та ытларах ÿсрĕ. Пичетĕн тĕп задачи халĕ — пирĕн социализмлă тăван çĕршывăн пурнăçĕпе ирĕклĕхĕ çине ултавлăн килсе тапăннă фашистла ирсĕр захватчиксене хирĕç кĕрешме совет халăхĕн хаяр курайманлăхне çĕклесси, мĕнпур ĕççыннисене тăшмана хирĕç татăклăн кĕрешме хавхалантарса пырасси, фронта активлă пулăшу парас тĕлĕшпе кашни колхозпа предприяти, районпа республика тата пĕтĕм çĕршыв умĕнче тăракан конкретнăй задачăсене пурнăça кĕртме мобилизацилесси пулса тăрать. Халăхсен сулпуçĕ Сталин юлташ пирĕн рабочисемпе служащисене, колхозниксемпе колхозницăсене предприятисенче тата колхозсенче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлесе, фронта валли ытларах хĕçпăшал, ытларах тырпул, апат-кăпат, промышленность валли ытларах чĕртавар парса тăма чĕннине мĕнле пурнăça кĕртсе пынине хаçатсен куллен çутатса тăмалла.

Çак тĕп задачăсене ăнланса илнĕ хаçатсем хăйсен ĕçĕсене вăрçă кунĕсенче чылай лайăхлатрĕç. Вĕсем Сталин юлташăн кăтартăвĕсене, партипе правительствăн решенийĕсене ĕççыннисем патне вăхăтра çитерсе пырса, вĕсене пурнăça кĕртме чĕнеççĕ, халăха кĕрешĕве мобилизацилеççĕ.

Хăйсен ĕçĕсене вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек урăхлатса çĕнетни енчен пăхсан, Улатăр, Тăвай, Калинин, Етĕрне тата Вăрмар районĕсенчи хаçатсем ăнăçлă утăмсем тунине палăртмалла. Вĕсем хăйсен районĕсем умĕнче тăракан задачăсене пурнăça кĕртме ĕççыннисене мобилизацилес тĕлĕшпе ытларах ĕçлеççĕ, массăсемпе таччăнрах çыхăнса тăраççĕ.

Вăрçă условийĕсенче пирĕн мирлĕ вăхăтринчен темиçе хут вăйлăнрах та çивĕччĕнрех ĕçлемелле. Ĕçри çитменлĕхсене фронтри пек пĕтерсе пымалла. Çитменлĕхсем пирĕн ĕçре сахал мар-ха. Пирĕн республикăн районĕсенчи чылай хаçатсем халĕ çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Акă, сăмахран, Вăрнар районĕнчи «Социализм çулĕпе» хаçат юлашки вăхăтра корреспондентсемпе тытакан çыхăнăва начарлатрĕ. Хаçатăн чылай корреспонденчĕсем фронта кайнă, редакци вĕсен вырăнне çĕнĕ çынсем ÿстерме тăрăшман. Хаçат производствăра малта пыракан çынсене çителĕксĕр явăçтарать. Çавна пула хаçатра час-часах пĕтĕмĕшле ыйтусемпе çырнă пысăк материалсем пичетленсе тухаççĕ. Хаçатăн страницисем çинче 13 материалран ытла пичетленсе тухнине пачах та курма çук. Район пурнăçĕнчи чылай ыйтусене хаçат çутатмасăр хăварать. Районри малта пыракан предприятисемпе колхоз пĕр-пĕр ĕç пуçарса ярсан, хаçат ун çинчен пичетлесе кăларать те çийĕнчех манса каять. Хаçат ялхуçалăхĕнче малта пыракансен районри канашлăвĕ чĕнсе калании, Кăмашари Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем укçа-тенкĕ парăмĕсене срокчен татас тĕлĕшпе чĕнсе калании, ирĕке тухнă районсенчи ĕççыннисене пулăшас тĕлĕшпе чĕнсе калании пичетлесе кăларнă. Анчах хаçат çак чĕнÿсене мĕнле пурнăçласа пыни çинчен çырма тăрăшман. Çакăн пек çитменлĕхсене Элĕк районĕнчи хаçатра та курма пулать.

Партин Центральнăй Комитечĕн пропагандăпа агитаци Управленийĕ, нумаях пулмасть районсенчи хаçатсен пысăк çитменлĕхĕсене палăртса, вĕсен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе татăклă задачăсем кăларса тăратрĕ. Пирĕн çав задачăсене çине тăрса пурнăça кĕртсе пымалла.

Кашни районри хаçатăн пуринчен малтан фронта пулăшас тĕлĕшпе район умĕнче тăракан конкретнăй задачăсене пурнăça кĕртме мобилизацилессишĕн ĕçлемелле. Хаçат ĕçне производствăра малта пыракан çынсенчен, специалистсенчен çĕнĕрен çĕнĕ корреспондентсем явăçтармалла. Хаçатăн хăйĕн вулакан ĕсене пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче тăвакан çитĕнÿсем çинчен, тĕнчере куллен пулса иртекен пысăк событисем çинчен тĕплĕн ăнлантарса памалла. Ку енĕпе уйрăмах хаçатра фронтран килекен боецсемпе командирсен, политработниксен çырăвĕсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Вăхăтлăха оккупациленĕ совет районĕсенче нимĕçсен фашистла захватчикĕсем çавтери тискер ĕçсем туни çинчен каласа парса, хаçатсен пирĕн халăхăн чĕринчи хаяр курайманлăх çулăмне татах та ытларах хăватлантармалла. Ку енĕпе материалсем çителĕксĕр тесе лармалли çук, çав материалсене организацилеме пĕлни кирлĕ.

Юлашки вăхăтра чылай хаçатсем ĕçри çитменлĕхсене критикăлассине йăпашлатрĕç. Ку вăл пачах та тĕрĕс мар. Пирĕн ĕçри çитменлĕхсене вăхăтра тăрă шыв çине кăлармалла, малта пыракан предприятисемпе колхозсен, вăрçă вăхăтĕнчи стахановецсен опытне куллен тĕплĕн çутатса пымалла.

Сталин юлташ хăйĕн кăçалхи Май уявĕн ячĕпе панă Приказĕнче çар ĕçне вĕренесси пирки ыйтăва татах та тепĕр хут çивĕччĕн лартрĕ. Тÿрех каламалла, районри хаçатсем юлашки вăхăтра ку ыйту çинчен пачах та çырма пăрахрĕç. Пирĕн хамăрăн паттăр Хĕрлĕ Çар валли çĕнĕрен çĕнĕ резервсем хатĕрлемелле, çар ĕçне вĕренес тĕлĕшпе çулпуç панă кăтартусем мĕнле пурнăça кĕрсе пынине куллен çутатса тăмалла.

Парти райкомĕсем хăйсен хаçачĕсем çине тимлĕнрех çаврăнса пăхни, хаçатсемшĕн ытларах тăрăшни кирлĕ. Халлĕхе ку тимлĕх пачах та çителĕксĕр. Пичет работникĕсене пăхса çитĕнтерессишĕн, корреспондентсен кадрĕсене стена хаçачĕнчен пуçласа малалла ÿстерсе пырассишĕн тимлĕн ĕçлемелле. Халĕ çуракин хĕрÿллĕ тапхăрĕнче хаçатсене уйрăмах пысăк пулăшу парас пулать.

Пирĕн хаçатсен хăйсен ĕçĕнче пур енĕпе те «Правда» хаçатран вĕренсе пымалла, «Правда» хаçатăн революцилле аслă традицийĕсене пĕтĕмĕшпех йышăнмалла. Большевиксен партийĕ аллинчи çивĕч те хăватлă хĕçпăшалпа — большевикла пичетпе усă курса, совет халăхне татăклă çапăçăва, социализмлă тăван çĕршывăн тискер тăшманĕсене— нимĕçсен фашистла захватчикĕсене пуçĕпех çапса аркатас ĕçе мобилизацилемелле.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Саланчăк ялне Çĕмĕрле районĕнчен уйăрса Хĕрлĕ Чутай районне кĕртесси çинчен

1. Саланчăк ялне Çĕмĕрле районĕнчен уйăрса Чăваш АССР-ĕнчи Хĕрлĕ Чутай районне кĕртес.

2. Администрацийе хуçалăх енчен Саланчак ялне Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Атнар ялсоветне пăхăнтарас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕн обязанноçĕсене тăваканĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули. 1941 çулти декабрĕн 2-мĕшĕ.

РСФСР Верховный Совет Президиумĕ 1942 çулти апрелĕн 22-мĕшĕнче кăларнă Указ тăрăх Саланчак ялне Çĕмĕрле районĕнчен уйăрса Чăваш АССР-ĕнчи Хĕрлĕ Чутай районне кĕртнĕ.

СТАЛИНЛА ВАХТĂНА ТĂРСА ĔÇЛЕРĔÇ

КАНАШ, майăн 4-мĕш. (Телефонпа). Вагонсем юсакан заводри стахановецсем майăн пĕрремĕшпе иккĕмĕшĕнче сталинла вахтăна тăрса ĕçлерĕç, фронт валли ытларах продукци туса кăларассишĕн кĕрешрĕç. Инструментальнăй цехри фрезеровщик, ВКП(б) членĕ, медаленосец Осипов юлташ çав кунсенче нормăна 1000 процент ытла тултарчĕ. Тухăçлă ĕçленипе пĕрлех вăл пысăк пахалăхлă продукци пачĕ. Çавăн пекех ремонтпа-механически цехри Пименов токарь те нормăпа пăхнинчен 7 хут тухăçларах ĕçлерĕ.

ТЭЦ коллективĕ май уявĕнчи ăмăртура малта пычĕ. Ку цехри Ямпольскипе Богаренко сменисем апрель уйăхĕнчи ĕç планне ытлашшипех тултарчĕç. Вĕсен сменисенчи рабочисем майăн пĕрремĕшпе иккĕмĕшĕнче те пархатарлăн ĕçлерĕç. Акă, Флегентов, Бельский, Скрыпник, Ковалев, Довженко т. ыт. стахановецсем те нормăна 3—4 хут ирттерсе тултарчĕç.

Т. МАЧУЛКА.

ЛЕНИН, СТАЛИН тата МОЛОТОВ юлташсем „Правда" редакцинче (1917 çул).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Майăн 3-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Майăн 3-мĕшĕнче фронтра нимĕнле паллă ĕçсемех те пулман.

Майăн 2-мĕшĕнче нимĕçсен 25 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 8 самолет пĕтнĕ.

* * *

Майăн 2-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен 11 орудине, 32 минометне, зенитнăй пулеметсен 9 точкине, темиçе автомашинине пĕтерсе тăкнă, сиенленĕ, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, чугунçул çинчи эшелона çĕмĕрнĕ, противникăн пехотине пĕр ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн артиллеристсем тÿрĕн тĕллесе персе нимĕçсен 3 танкне çĕмĕрнĕ. Çав участокрах пирĕн минăсем çине пырса кĕрсе противникăн татах та тепĕр 4 танкĕ пĕтнĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче нимĕçсем 400 çынна çити йышпа пирĕн пехотăн подразделенине çавăрса илме хăтланнă. Гитлеровецсем подразделени патне çывăхах пырса çитсен, пирĕн боецсем вĕсем çине винтовкăсемпе пулеметсенчен вăйлăн пеме тытăннă. Нимĕçсен каялла чакмалла пулнă. Çапăçу хирĕнче вĕсен салтакĕсемпе офицерĕсем 150 çын вилсе юлнă. Взвод командирĕ Когарлицкий юлташ çав çапăçура 12 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Майăн 2-мĕшĕнче нимĕç самолечĕсем питех те кирлĕ пĕр çар объекчĕ патне кĕрсе кайма хăтланнă. Матвеев юлташ командир пулса ертсе пыракан пирĕн чаçăн летчикĕсем тăшман самолечĕсен çулне пÿлсе лартнă. Гитлеровецсем хăйсен 7 машинине сухатса, çитме шутланă тĕле çитеймен. Противника хирĕç пынă сывлăшри çапăçура хăйсене уйрăмăнах çаксем палăртнă: старши лейтенант Зеленов, вăл «Юнкерс—88» йышши икĕ самолета персе антарнă, капитан Булаев, вăл та «Юнкерс—88» йышши икĕ самолета персе антарнă, старши лейтенант Горбачевскипе лейтенант Зотов, тăшманăн пĕрер самолет персе антарнă.

* * *

Н. ялĕнчи урам хушшинчи пынă çапăçура взвод командирĕн помощникĕ Д. Чередниченко пирĕн войскăсен тылне кĕмешкĕн шуса пыракан нимĕçсен 10 салтакне асăрханă. Чередниченко юлташ хÿтлĕх хыçне пытаннă та винтовкăран персе 8 гитлеровеца вĕлернĕ. Нимĕçсен чĕрĕ юлнă 2 салтакĕ тытăна парăннă.

* * *

Маркиянчик юлташăн подразделенийĕнчи снайперсем (Кăнтăр фрончĕ) противника пысăк сухатусем кÿреççĕ. Снайпер Брыкин юлташ 126 гитлеровеца вĕлернĕ, Ипатовпа Фаустов кашни 100-шер гитлеровеца пĕтернĕ.

* * *

Калинин партизанĕсен В. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç ăнăçлăн кĕрешет. Нумаях пулмасть, отряд нимĕçсен колонни çине тапăннă. Партизансем хăвăрт перекен 2 тупă, темиçе минометпа автомат, снарядсемпе обмундировани тиенĕ 38 лав тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 98 вилли вырта юлнă. Темиçе кун иртсен, пĕрре çĕрле партизансем ялта тăракан нимĕçсен гарнизонĕ çине пырса тапăннă. Партизансен виçĕ ушкăнĕ яла пĕр вăхăтрах темиçе енчен те çĕмĕрсе кĕрсе кайнă. Пачах та кĕтмен çĕртен çавтери хăвăрт пырса çапнине пула нимĕçсем хирĕç тăма пултарайман. Партизансем 80 гитлеровеца, çав шутра 9 офицера, пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен 268-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 499-мĕш полкĕн 2-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Рудольф Кинг çапла каласа панă: «Кĕркунне эпĕ амантăм. Март уйăхĕнче мана сывалакансен командине çырчĕç те фронта ячĕç. Эпĕ каллех хам малтан пулнă полках лекрĕм, анчах унта хамăн малтанхи юлташсенчен никама та тупаймарăм. Çавăн пекех тата малтанхи офицерсем те пурте стройран тухнă, вĕсем вырăнне урăххисене лартнă. Нумаях пулмасть вырăссем пирĕн ротăна сасартăк пырса тапăнчĕç. Эпĕ амантăм та блиндаж патнелле шуса кайрăм. Блиндажа кĕрсен, эпĕ унта хамăрăн аманнă виçĕ çынна куртăм, çав шутра рота командирĕ Штоль лейтенант та пурччĕ. Часах çакă паллă пулса тăчĕ: пирĕн рота каялла чакнă, пире, аманнăскерсене, нимĕн шеллемесĕрех пăрахса хăварнă. Кăшт вăхăт иртсен, красноармеецсем çитрĕç те пире тыткăна илчĕç».

* * *

Калинин облаçĕнчи Жукова ялĕнче нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем 59 çулти А. А. Бобров колхозника питĕ тискеррĕн асăплантарса пĕтернĕ. Гитлеровецсем унăн аллисене, урисене татнă, юлнă ÿт-пĕвне вĕри тимĕрпе çунтарнă.

* * *

Апрель уйăхĕн вĕçĕнче Италире фашистсен партийĕн паллă деятелĕсене нумайĕшне арестленĕ. Çапла шутлаççĕ: çав арестленĕ деятельсем Итали войскисене Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта ярассине хирĕç пулнă тата Италие халех вăрçăран кăларма ыйтнă.

Майăн 4-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Майăн 4-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле паллă ĕçсемех те пулман.

* * *

Ленинград фронтĕнчи уйрăм участоксенче кĕрешекен пирĕн чаçсем виçĕ кун хушши çапăçса противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 2.000 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Морозов юлташ командир пулса тăракан чаçри боецсем (Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕ), противник вăйлăн хирĕç тăнине сирсе пăрахса, малалла куçнă та питех те кирлĕ коммуникацисене йышăнса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн часть тăшмана вăйлăн пырса çапнă. Çапăçу хирĕнче 300 виле хăварса, нимĕçсем каялла чакнă.

* * *

Старши лейтенант Дорохов командир пулса ертсе пыракан совет разведчикĕсем, 11 çын, нимĕç войскисен тылĕнче 4 кун хушши пулнă. Çав вăхăт хушшинче вĕсем тăшман çине темиçе хут та хăюллăн тапăннă, нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 30 çынна вĕлерсе пĕтернĕ. Пĕр операци вăхăтĕнче разведчиксем нимĕçсен самолетне çунтарса янă.

* * *

Оборонăн малти линийĕсем патне пымалли çулсене сыхласа тăнă чухне пулеметчик Тетерин хăйĕн патне нимĕçсен 30 автоматчикĕ çывхарса пынине асăрханă. Нимĕçсене çывăха пыма парса, Тетерин пулеметран пеме тытăннă, 18 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Ыттисем тарса пĕтнĕ.

* * *

Снайпер Иван Изегов икĕ уйăх хушшинче 134 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Аяларахра нимĕçсен 15-мĕш пехотнăй дивизинчи 81-мĕш полкăн 10-мĕш ротин командирĕ лейтенант Гейнц Бетман, çапăçура вилнĕскер, çырса пынă дневникрен илнĕ сыпăксене пичетлетпĕр:

«Апрелĕн 3-мĕш. Вырăссем пирĕн çине орудисенчен переççĕ. Йывăр аманнисем нумай.

Апрелĕн 4-мĕш. Лейтенант фон Франенберг аманчĕ.

Апрелĕн 6-мĕш. Батальонра 46 çын вилнĕ, 80 çын аманнă, пĕр çын ним хыпарсăр çухалчĕ.

Апрелĕн 9-мĕш. Вырăссем пĕрмаях тапăнаççĕ. Эпир чакса пыратпăр. Манăн ротăра 25 çын вилчĕ. Ытти ротăсем те пысăк çухатусем турĕç.

Апрелĕн 16-мĕш. Позицие улăштартăмăр. Вырăссен темиçе салтакне тыткăна илтĕмĕр. Пурне те персе вĕлертĕмĕр.

Апрелĕн 18-мĕш. Вырăссен аманнă старши лейтенантне тыткăна илтĕмĕр. Персе вĕлертĕмĕр.

Апрелĕн 19-мĕш. Пысăк çухатусем пулнă пирки 10-мĕшпе 11-мĕш ротăсене пĕрлештерчĕç. Мана ротăн командирĕ турĕç. Пирĕн батальона каллех çапăçăва кĕртсе ячĕç. Ăна противникăн малалла шăтарса кĕрсе кайнă ушкăнне çавăрса илме приказ пачĕç. Анчах пире хамăра çавăрса илчĕç. Пысăк çухатусем туса çĕç çавăрса илнĕ вырăнтан тухрăмăр».

* * *

Пирĕн боецсем, Ленинград облаçĕнчи Гусево ялне нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă хыççăн, красноармеецсен касса-çурса пĕтернĕ 17 виллине тупнă. Вырăнта пурăнакан çынсем каласа панă тăрăх, тыткăна илнĕ красноармеецсене гитлеровецсем нумай вăхăт хушши асаплантарнă та кайран вĕсене вĕлернĕ.

* * *

Франкфурт хулинчи (Германия) заводсенчен пĕринче 4 рабочи хăйсене хăйсем вĕлернĕ, вĕсем чехсем пулнă. Гитлеровецсем ютçĕршыв рабочийĕсене этемле мар асаплантараççĕ, çав асапа çÿлте асăннă рабочисем тÿссе ирттереймен. Германири предприятисенче каторгăлла ĕçре ĕçлесе тарăхса çитнĕ ютçĕршыв рабочийĕсем хăйсене хăйсем вĕлерни час-часах пулать.

* * *

Югославири партизансен отрячĕсем Итали оккупанчĕсен пĕр пехотнăй чаçне çавăрса илнĕ те ăна икĕ кун хушши пĕрмаях пыра-пыра çапнă. Партизансем Итали салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ тата чылайăшне тыткăна илнĕ. Противникăнне станковăй тата ручной пулеметсем, 300 винтовка, тумтирсемпе ытти çар пурлăхĕсем тытса илнĕ.

Юханшывсем тăрăх çÿрекен суднăсем çинчи хĕрарăм командисем

Тури-Атăл пароходствин «Краснознаменная» ятлă буксирнăй пароходĕ çинче хĕрарăм команди организациленеççĕ. Çав суднăн капитанĕ пулма Мария Попована уйăрса лартнă. Вăл иртнĕ навигацире «Пропагандист» пароход çинче капитан помощникĕ пулса ĕçленĕ, хăйĕн лайăх пултарулăхне палăртнă. Çак çулти навигацире 300 хĕрарăма яхăн фронта каячченсуднăсем çинче ĕçленĕ хăйсен упăшкисем вырăнне тăраççĕ. Вĕсем пурте тенĕ пекех кочегарсен, масленщиксен, рулевойсен тата ытти специальноçсен курсĕсенчен те вĕренсе тухнă. (ТАСС).

Акана массăллăн тухрĕç

ИШЛЕЙ, майăн 4-мĕш. (Телефонпа). Районри пур колхозсем те çуракине тухрĕç. Паянхи куна 1541 гектар сухаланă, 513 гектар çине пĕрчĕллĕ тырăсем акнă. Çуракинче уйрăмах Сталин, Молотов ячĕсемпе хисепленекен тата «МОПР», «Восток» колхозсем малта пыраççĕ.

Пур çĕрте те колхозниксем акара хастарлăн ĕçлени палăрать. Нумай колхозниксем, колхозницăсем кулленхи нормăна ирттерсе пурнăçласа пыраççĕ. «Торинино» колхозра Ксения Пыркина, Елена Иванова сухаçăсем талăкне 1,35-шер гектар сухалаççĕ. Очкассинчи «КрасныеОточево» колхозра А. Виноградова, М. Герасимов, З. Федорова, А. Семенов колхозниксем пĕр касăллă плугпа кунне 0,65-шер гектар сухалаççĕ.

Трактор бригадисем пурĕ 331 гектар сухаланă. Ефимов (9-мĕш бригада), Липов (12-мĕш бригада) юлташсем ертсе пыракан трактор бригадисем уйрăмах лайăх ĕçлеççĕ. 9-мĕш бригада ĕнер 72 гектар, 12-мĕш бригада 54 гектар сухаланă.

Районра çураки ĕçĕнчен çакă курăнать. Акас ĕç сухалассинчен чылай юлса пырать. Çакă вăл пулмалла мар. Пулса çитсе пыракан çĕре сухаланă хыççăнах сÿрелесе, акса пымалла. Çакна вăхăтра тума кирли çинчен ВКП(б) райкомĕ колхоз председателĕсене асăрхаттарчĕ.

П. СИДОРОВ.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Фронтри пек хастарлăн ĕçлеççĕ

КАЛИНИНО, майăн 4-мĕш. (Телефонпа). Районри колхозсем çуракине массăллăн тухрĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем вăйлă тырпулăн никĕсне ăнăçлăн хывассишĕн фронтри пек хастарлăн ĕçлеççĕ. Нумай колхозсем, кăçалхи большевикла çуракине тĕплĕн хатĕрленсе тухса, ăна 7—8 кун хушшинче ирттерме обязательствăсем илнĕ.

Шуркассинчи коммунист К. Спиридонов ертсе пыракан «Социализм» колхоз кăçалхи большевикла çуракине 7 кун хушшинче ăнăçлăн туса ирттерме обязательство илчĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем çуракинче пысăк хастарлăхпа ĕçленине пула колхоз майăн 4-мĕш тĕлне пĕрчĕллĕ тырăсене акса пĕтерчĕ. Колхозниксем пилĕк кун хушшинче 44 гектар сĕлĕ, 12 гектар çурхи тулă, 6 гектар урпа, 15 гектар пăрçа акса хăйсем çине илнĕ обязательствăна пысăк пахалăхпа пурнăçларĕç.

Çавăн пекех Хурăн-Кăкшăмри «Красноармеец» колхоз та (председателĕ И. Николаев) пĕрчĕллĕ тырăсене акмалли плана ăнăçлăн пурнăçларĕ. Колхоз пĕрчĕллĕ тырăсене пурĕ 69 гектар акрĕ. Кашни колхозник, колхозница çуракинче 2—3 хут лайăхрах, хăвăртрах ĕçлет. С. Карпов, Е. Семенова, К. Петрова колхозницăсем иккĕшер лашапа кунне 1,25 гектар сухалас вырăнне 3-шер гектар сухаларĕç. Ĕç нормине 200 процент ытла тултарса пычĕç. 83 çулти М. Софронов колхозник, хăй ватă пулин те, хĕрÿллĕн ĕçлет. Вăл ытти колхозниксемпе пĕрлех суха турĕ. Кулленхи ĕç нормине 150 процент тултарать.

Ишлейри «Комбайн», Сĕньял-Явăшри «Сĕньял» колхозсем те çак кунсенчех пĕрчĕллĕ тырăсене акса пĕтереççĕ. Ермошкăри Калинин ячĕпе тăракан колхозра çураки хĕрÿллĕн пырать. Колхозниксем ĕçе ирхине 3 сехетрех тухса тĕттĕм пуличченех ĕçлеççĕ. А. Васильева, Н. Лаврова пĕрачасем ертсе пыракан бригадĕсем уйрăмах лайăх ĕçлеççĕ.

Колхозра «Стахановец» ятлă стена хаçачĕ тухса тăрать, çуракинчи ударниксемпе стахановецсен ĕçне çутатса пырать, колхоз ĕçĕнчи çирĕп дисциплинăшăн кĕрешет.

Пĕтĕмĕшпе илсен, паянхи куна районĕпе 3.624 гектар сухаланă, 2.632 гектар акнă.

Е. В.

Кĕрхи тырăсем юр айĕнчен лайăх тухрĕç

Республикăри районсенче кĕрхи тырăсен калчисене малтанхи хут пăхса тухнă хыççăн çакă курăнать: пĕтĕмĕшпе илсен, пур колхозсен уйĕсенче те кăçал кĕрхи тырăсем юр айĕнчен лайăх тухрĕç. Первомайски, Етĕрне, Чкаловски, Канаш, Вăрмар, Хĕрлĕ Чутай районĕсенчи колхозсенче кĕрхи тырăсем пур çĕрте те лайăх.

Апрелĕ кунсем тĕнĕ май кĕрхи тырăсен калчисем симĕсленсе тикĕс ÿсе пуçлама тытăннă. Колхозсенче калчасене апатлантарас ĕç сарăлса пырать. Майăн 1-мĕш тĕлне республикипе пурĕ 2.491 гектар çинчи кĕрхи тырăсене апатлантарнă. Элĕк районĕнче—131 гектар, Канаш районĕнче—321 гектар, Вăрмар районĕнче—380 гектар, Шăхасан районĕнче—481 гектар, Етĕрне районĕнче 420 гектар, Тăвай районĕнче—246 гектар çинчи кĕрхи тырăсен калчисене апатлантарнă.

Тикĕс ÿссе симĕсленсе пыракан калчасем кăçал пысăк тухăçлă тырпул пулассине палăртаççĕ, колхозниксемпе колхозницăсене татах та лайăхрах ĕçлеме хавхалантараççĕ.

Сталин юлташăн приказĕ çине ответлесе

ÇĔМĔРЛЕ, майăн 4-мĕш. (Телефонпа, хамăр корр.). Майăн пĕрремĕшĕнче Оборона Халăх Комиссарĕ Сталин юлташăн приказне илнĕ майла комбината ĕçлекенсен митингĕ пулса иртрĕ. Митингра стахановец Бутин çапла каларĕ:

— Кăçал эпир май уявне производствăра хĕрӳллĕн ĕçлесе ирттеретпĕр. [illegible] Сталин юлташ [illegible] 2—3 хут ӳстерме пулатăп,—терĕ.

Бутин юлташ майăн пĕрремĕшĕнче [illegible] нормăна 2 хут ирттерсе тултарчĕ. Çавăн пекех Уточкин, Волков, Прокопьев, Киселев, Алохин, Семенов рабочисем те, Сталинла [illegible] заданисене 200—250 [illegible].

Оборона Халăх Комиссарĕн приказĕ рабочисен ĕçри хастарлăхне татах та ӳстерчĕ. Майăн малтанхи кунĕсенче комбинатри чылай цехсем плана ытлашшипех пурнăçа кĕртрĕç. Механически сушильнăй цехсем, çавăхран, 110-шар процент тултарчĕç.

Х. ЛИСИН.

—⊙—

Çĕнĕ ялкорсем хутшăнчĕç

ВКП(б) Центральный Комитечĕ районри хаçатсен ĕçне вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетме кăтартса панине эпир, Калинински райхаçат редакцинче ĕçлекенсем, хамăрăн пухура сӳтсе-яврăмăр. Редакцинче ĕçлекенсен тата хаçата çыракансен йышĕ юлашки вăхăтра чакнă май, пуху ялкорсемпе ĕçлессине вăйлатма кирлĕ тесе палăртса хăварчĕ. Çавăн хыççăн эпир ялкорсен ретне ялти активран ӳстерес тĕлĕшпе ĕçлеме пуçларăмăр. Чылай ялсоветсен, колхозсен председателĕсем, агрономсемпе зоотехниксем, бригадирсемпе звеноводсем патне пирĕн хаçат ĕçне хутшăнма чĕнсе çырусем çыртăмăр. Капла туни ахалех пулмарĕ: вĕсенчен хăшпĕрисем хаçата тăтăшах çырса тăма пуçларĕç. Çăмахран, Алгазинăри «Чăваш Коммуни» колхоз председателĕ Ф. Сандимер юлташ пирĕн активлă ялкор пулса тăрать. Вăл хăйĕн колхозĕнчи ĕçсем çинчен хаçата кулленех çырать. Çавăн пекех Каганович ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Н. Ильин, Пушкин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ С. Степанов, «Смычка» колхоз председателĕ П. Ландышев, «Искра» колхоз председателĕ А. Флотский юлташсем те хаçата активлăн çырса тăма пуçларĕç.

Пирĕн корреспондентсен речĕ ялти активран ӳсни çинчен юлашки вăхăтра пичетленĕ статьясемпе заметкăсем те калаççĕ. Мартăн 15-мĕшĕнчен вара эпир колхоз председателĕсенне 17 статья, ялсовет председателĕсенне — 4, пуçламăш парторганизаци секретарĕсенне—4, бригадирсемпе стахановецсенне — 11, агрономсемпе зоотехниксенне 7 статья пичетленĕ.

Ялкорсемпе тери пуçарах, хаçата çавăн чухлĕ лайăхрах кăларма пулать. Çавăншăн эпир вĕсен ретне ӳстерсех пыратпăр.

Е. ВОРОБЬЕВ.
«Коммунизм ялавĕ» хаçат редакторĕ.

Майăн 1-мĕшĕ Мускавра

Хĕвел тухиччен [illegible] Мускав [illegible] Ирпе 6 сехетре, Оборона Халăх Комиссарĕ Сталин юлташăн Майăн 1-мĕшĕнчи хăларнĕ Приказне радио тăрăх пĕлтерĕç. [illegible]

7 сехет тĕлнелле ирпе Мускав тулли пурнăçпа пурăнать. Фабрикăсемпе заводсенче çĕршыв обороне тĕреклетекен хĕрӳллĕ ĕç [illegible] уйĕ пысăк патриотизма, вăйлă хавхаланăва, тăшмана çĕнтерес тĕлĕшпе тем те тума хатĕррине кăтартрĕ.

Хулана ытлашши ялкăшакан, куçа çисе тăракан ялаласемпех илемлет- [illegible]

Малтан Горький ячĕллĕ тăракан Культура тата Канăçлă паркре Майăн 1-мĕшĕнче [illegible]

Вăрçăмакан делегацийĕсем госпитальсене тухрĕç. Вĕсем боецсене [illegible] парнесем парĕç.

Пысăк театрăн филиалĕнче Мускав çар округĕн [illegible] боецсем, командирсем тата политработниксем валли спектакльсем лартса парĕç. Артистсен бригадисем чылайĕшĕсем, таçсене — стрелоксем, зенитчиксем патне концерт пама ирхине ирех тухса кайрĕç. (ТАСС).

Майăн 1-мĕшĕ ирĕке тухнă районсенче

ХАРЬКОВ ОБЛАÇĔ, майăн 2-мĕш. (ТАСС). Сталин юлташăн Майăн 1-мĕш ячĕпе панă приказĕ Харьков облаçĕнчи колхозниксем хушшинче ĕçре çĕнĕ çĕкленӳ пуçласа ячĕ. Ирĕке тухнă ялсенче пулса иртнĕ митингсенче колхозниксем хăйсем сурăхи пĕтиччченех сталинла боевой вахтăна тăни çинчен пĕлтерчĕ. Çурхи ака ĕçĕсем пур çĕрте те ăнăçлăн пулса пыраççĕ. Облаçри районсенче, тулли мар даннăйсем тăрăх, çуркунне ир акмалли тырпулсене 7000 гектар акса хăварнă.

Темиçе пин гектар çине сахăр кăшманĕ акса хăварма хатĕрленсе çитнĕ.

СМОЛЕНСК ОБЛАÇĔ, майăн 2-мĕш. (ТАСС). Фронт линийĕ çывăхĕнче вырнаçнă халăх пурăнакан пунктсенче, артиллери кĕрлевĕ те илтĕнекен çĕрте, Майăн 1-мĕш кунĕ фронт валли ывăнма пĕлмесĕр ĕçленипе иртнĕ.

Командовани чĕннипе Медынь районĕнче пин çын ытла ирпе 6 сехетрех çурхи шыв ватса пĕтернĕ çулсене юсанă çĕре тухнă. Фронт валли грузсем турттарассине хăвăртлатас тесе вĕсем пысăк çĕкленӳпе те хавхаланупа ĕçленĕ.

Сухиничи районĕнчи колхозниксем праздника уйхирте хĕрӳллĕн ĕçленипе уявласа ирттернĕ.

КАЛИНИН, майăн 2-мĕш. (ТАСС). Калинин хулинчи вагонсем тăвакан заводăн васкавлăн юсанă 3 №-лĕ цехĕ ĕçлеме пуçланă. Унăн коллективĕ малтанхи кунах панă задание тухĕçлăн тултарнă. Çавăн пекех 2 №-лĕ цехпа литейнăй цех та аван ĕçленĕ.

Фашистла захватчиксене айăплакан приговор

1942 çулти апрелĕн 27-мĕшĕнче Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ Совет Союзĕпе дипломатиллĕ çыхăну тытса тăракан государствăсем патне нота ячĕ. Çав нотăра В. М. Молотов юлташ фашистла пусмăрçăсем вăхăтлăха туртса илнĕ совет районĕсенче çавтери усал та тискер ĕçсем тунине пĕтĕм тĕнче умĕнче уçса кăтартать. Гитлеровецсен тĕллевĕ пурне те паллă: вĕсем пирĕн çĕршыва çаратасшăн, фабрикăсемпе заводсене, çĕрпе унăн пуянлăхĕсене туртса илесшĕн. Совет Союзĕнчи халăхсен культурипе искусствине пусарса лартасшăн, ирĕклĕ рабочисемпе хресченсенчен чура туса хурасшăн, совет халăхне вĕлерсе пĕтересшĕн. Гитлеровецсем çавăн пек тĕллевпе тунă тискер ĕçсене В. М. Молотов юлташăн нотинче çителĕклĕ илсе кăтартнă. Çав преступленисенчен нумайĕшне эпĕ хам куçпа хам курнă.

Кирюхин юлташ ертсе пыракан чаçсем Хĕвеланăç фрончĕн пĕр участокĕнче Гитлерăн йыткĕтĕвĕсене каялла 400 çухрăм хăваласа кайрĕç. Фашистла пусмăрçăсем унти хуласемпе ялсене çĕрпе танлаштарнă, çĕре кĕлпе, кăмрăкпа витсе хăварнă.

Анчах гитлеровецсен çак усал та тискер ĕçĕсенчен вĕсен вăйĕ мар, вĕсем совет халăхĕпе унăн Хĕрлĕ Çарĕнчен хăрани курăнать.

Пирĕн çĕршыври халăхсем гитлеровецсен тискер кайăкла ĕçĕсенчен хăраса ӳкес çук; пачах та урăхла, фашистсем мĕн чухлĕ тискерленеççĕ, пирĕн вĕсене хирĕç кĕрешес хаярлăх çавăн чухлĕ ӳсет. Фашистла пусмăрçăсен тискер кайăкла ĕçĕсем çинчен вуласан, пирĕн алăсем чăмăртанаççĕ, ăш-чик хаяр çилĕпе тулать. Этем питне çухатнă фашистсен хура ĕçĕсене пĕрне те манмăпăр, пĕриншĕн те каçармăпăр. Эпир вĕсене пуриншĕн те тавăрăпăр.

Совет правительстви В. М. Молотов нотинче çав преступленисемшĕн Германи правительствипе командованийĕ ответлă пулса тăраççĕ, тесе каларĕ. В. М. Молотов юлташăн ноти вăл — совет правительствипе совет халăхĕ фашистла захватчиксене айăпласа çырнă приговор. Эпир çав приговора алла хĕçпăшал тытса пурнăçлама тивĕçлĕ. Мĕнпур вăя — фашизма аркатса тăкма, фронта пулăшма!

Пирĕн юратнă çулпуç «1942 çула нимĕçсен фашистла войскисене пĕтĕмпех аркатса тăкмалли тата Совет çĕрне гитлерла мерзавецсенчен ирĕке кăлармалли çулталăк туса хумалла», тесе панă приказа пурнăçа кĕртер. Гитлерла бандăсене тивĕçлипе тавăрмалли вăхăт çитрĕ. Çак вăл пире, Хĕрлĕ Çар воинĕсене, Хĕвеланăçнелле куçассине хăвăртлатма, тыл çыннисене — фронта пулăшассишĕн татах та лайăхрах ĕçлеме хушать.

Н. СЕМЕНОВ.
Батальоннăй комиссар, Чăваш АССР Верховный Совечĕн депутачĕ.

Франциври рабочисем Майăн 1-мĕшĕнче чĕнсе калани

ЛОНДОН, майăн 1-мĕш. (ТАСС). Ирĕклĕ французсен движенийĕн деятелĕсем Германи пусмăрĕ айĕнче асапланакан француз рабочисен Майăн 1-мĕшĕнче чĕнсе каланине илнĕ. Çав чĕнĕве вĕсем Совет Союзĕнчи, Англири тата Америкăри рабочисем патне çырнă. Унта çапла каланă: «Юлташсем, эпир сире пирĕн çине малашне те шанса тăма чĕнетпĕр. Эпир Францие сутакансемпе пĕр пулса ĕçлемен, ĕçлеместпĕр те. Германия темĕн тĕрлĕ асаплантарса тата выçлăхпа хăратса пирĕнтен хăшне-пĕрне нимĕçсемшĕн ирĕксĕрлетсе ĕçлеттерме пултарчĕ. Эпир хамăрăн мĕнпур шанчăка сирĕн çинче тытатпăр, юлташсем, эпир сире кăна, çĕнтерӳ валли кирлĕ самолетсем, танксем, суднăсем тăвакансене, шанатпăр. Эпир сире пулăшмашкăн мĕнпур вăй-хала пĕтĕмпех пама хатĕр, сире пулăшса противникăн промышленноçне чăрмантарас тесе мĕнпур майпа усă курма тăрăшатпăр. Эпир Германи валли ĕçлекен предприятисем çине эсир бомбăсем пăрахнине ырлатпăр. Пирĕн çĕршыв халĕ те сăнчăрта тăрать-ха. Француз халăхĕн представителĕ де Голль союзниксемпе пĕр пулса, вĕсемпе пĕрле алла-аллăн тăрса кĕрешет. Унăн çарĕ халĕ пысăках пулмасан та, Францире тем пысăкĕш вăйсем унпа пĕрле гитлерла Германие хирĕç тăма май пулассине кĕтсе тăраççĕ. Противник çав вăя нумайччен сăнчăрта тытса тăма пултараймĕ.

Юлташсем, çак Майăн 1-мĕш кунĕнче, пирĕншĕн те, сирĕншĕн те асăнусемпе паллă куна, пирĕн чĕресем сирĕн чĕресемпе пĕрле тапаççĕ. Пирĕн çинчен час-часах шухăшлăр та астуса тăрăр: эсир хăварăн юлташăрсене ирĕке кăлармалли çула хывса пыракансем пулатăр, эсир кăвăрăн хăрушлăхра пурăнакан юлташăрсемшĕн ĕçлетĕр».

—————

Германи войскисемпе Руэри халăх хушшинче пулса иртнĕ тытăçусем

НЬЮ-ЙОРК, майăн 2-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Руэре (Çурçĕр-хĕвеланăç Франция) Германи войскисемпе вырăнти граждăнла халăх хушшинче тытăçусем пулса иртнĕ. Граждăнла халăхран вилнисем те, аманнисем те пулнă.

НЬЮ-ЙОРК, майăн 3-мĕш. (ТАСС). Юлашки хыпарсем тăрăх, Руэре (Çурçĕр-хĕвеланăç Франция) Германи войскисемпе вырăнти халăх хушшинче пулса иртнĕ тытăçура 50 нимĕçе вĕлернĕ. Германин оккупациллĕ влаçĕсем васкасах çавăншăн халăха асап кăтартмалли ĕçсем тума пуçланă. Заложниксем нумай тытса хупнă.

—————

Германи самолечĕ Швеци территорийĕ тĕлĕнче вĕçни

СТОКГОЛЬМ, майăн 3-мĕш. (ТАСС). Швецин телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 30-мĕшĕнче ирхине шведсен зенитнăй артиллерийĕ Швеци территорийĕ çине Сконен кăнтăр çыранĕсем енчен вĕçсе кĕнĕ нимĕç самолечĕ çине пенĕ. Темиçе кутчен асăрхаттарса пенĕ хыççăн самолет хĕвел-тухăçнелле вĕçсе кайса курăнми пулнă.

Сталин юлташăн Майăн 1-мĕшĕнчи приказĕ пирки ютçĕршывсенче мĕн çыраççĕ

АНГЛИЯ

ЛОНДОН, майăн 2-мĕш. (ТАСС). Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказне Англире питех те пысăк интереспа вулаççĕ, Англи халăхĕн чи пысăк сийĕсенче анлăн сӳтсе-яваççĕ. Пичет те, радио та приказ çинчен çапла пĕлтерсе тăраççĕ. «Дейли телеграф энд морнинг пост», «Ивнинг ньюс», «Стар», «Ивнинг стандарт» тата ытти хаçатсем те приказ çинчен умстатьясем, ятарласа çырнă статьясем пичетлесе кăларнă.

«Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçат çапла çырать: «Сталин Германи çарĕ халĕ 10 уйăх каярахринчен чылай вăйсăртарах тесе калани никама та иккĕлентермест. Нимĕçсен чи паха офицерĕсемпе салтакĕсене тата вăрçă материалĕсене темĕн чухлех пĕтерсе тăкнă. Вырăссен ресурсĕсемпе резервĕсем Гитлер Германире тата оккупациленĕ государствăсенче мобилизацилеме пултарнă ресурссемпе резервсенчен нумай пысăкрах». «Сталин чăннипех çапла калама пултарать,—тет малалла çав хаçатах,—халĕ вырăссен заводĕсенчен фронт валли ытларах та ытларах хĕçпăшалсем тата самолетсем туха тăраççĕ. Унсăр пуçне,—паллă туса хăварать хаçат,—Англипе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем те Совет Союзне «вăрçă хатĕрĕсем парса пулăшас ĕçе татти-сыпписĕр ӳстерсе пыраççĕ». «Совет халăхĕн çулпуçĕ çакна ĕненте-рет,—тесе çырать юлашкинчен хаçат,—1942 çулта вăл Германие пĕтĕмĕшпех поражени кӳмелли çул туса хума пултарать. Эпир вырăссем хăйсен вăйĕсене май килнĕ таран пĕтĕмĕшпех çĕклессине çирĕппĕн шанса тăма пултаратпăр. Вырăс халăхĕ те çакна шанса тăма пултарать: эпир тата пĕрлешнĕ ытти çĕршывсем те гитлерла тиранне хăвăрт та пĕтĕмĕшпех пĕтерсе лартассишĕн мĕнпур вăйăмăрсене хурăпăр».

«Ивнинг ньюс» хаçат Сталин приказĕн уçăмлă стильне паллă туса çырать. «Сталин,—тет çав хаçат,—вăрçă кам майлă çаврăнса ӳкессине витĕр куракан çын. Унăн ăсĕ уçăмлă та çутă, унăн тĕпчевĕсем ĕçсем малалла мĕнле пулса пырассине тĕрĕссипе кăтартса параççĕ. Паян вăл Майăн 1-мĕшĕнчи приказĕнче Европăри лару-тăру çинчен пĕтĕм Европа çуллахи хаяр çапăçусене кĕтсе тăнă самантра калать. Вăл пире тӳррĕн те витĕмлĕн курма пултаракан куçсем фактсене мĕнле курса тăни çинчен калать. Вăл Гитлер системин шанчăксăр структуринче çурăк-çурăксене асăрхаса тунă, анчах та çапăçусем мĕнле пуласси çине улталанса çăмăллăн пăхмасть вăл. Сталин хăйĕн пĕтĕм халăхне татах та вăйлăнрах ĕçлеме хушать, татах та тĕреклĕрех пулса çапăçма чĕнет».

Хаçат пĕрлешнĕ çĕршывсен пĕрлĕхне малашне татах та ытларах вăйлатма, Англин хĕçпăшаллă вăйĕсен активлăхне ӳстерме чĕнет.

—————

КАНАДА

НЬЮ-ЙОРК, майăн 2-мĕш. (ТАСС). Канадăри мĕнпур пичет Сталин юлташăн Майăн 1-мĕшĕнчи приказне пичетлесе кăларнă, ăна анлăн ăнлантарса панă.

Монреальре (Канада) тухакан «Стар» хаçат çапла çырать: «Сталин приказĕ питех те хăватлă та хавхаланулла тата хăюллă пулнипе палăрса тăрать. Сталин приказĕ вырăссен чаплă çарĕсемшĕн кăна мар, тата ытти пĕрлешнĕ çĕршывсен мĕнпур тинĕçĕр çинчи, тинĕсри тата сывлăшри вăйĕсемшĕн те пысăк ĕçсем тума хавхалантаракан чаплă чĕнӳ пулса тăрĕ».

«Ситизен» хаçат (Оттавăра тухса тăрать) хăйĕн «Сталинăн аслă посланийĕ» ятлă умстатьинче çапла çырать: «Сталин приказĕ вăл—çак вăрçăн чаплăран та чаплă документчĕ. Сталинăн приказĕ пуриншĕн те уçăмлă та çутă, вăл пурне те ăнланма çăмăл, çав вăхăтрах хăюллă.

Çапăçма, ĕçлеме чĕнни енчен пăхсан, Сталинăн приказĕ историллĕ заявлени пулса тăрать. Вăл—çулпуç хăйĕн халăхне чĕнсе калани. Çав чĕнӳре нимĕнле иккĕленни те, хăраса тăни те çук. Вăл хăйĕн халăхĕн хĕçпăшал вăйĕ пирки нимĕнле иккĕленсе тămалли шухăш та хăвармасть. Çав приказ вăл—хăй мĕнле çулпа пынине пĕлсе тăракан, чăн-чăн çулпуç пулса тăракан вăйлă çыннăн хăватлă чĕнĕвĕ».

«Глоб мэйл» ятлă хаçат (Торонтора тухса тăрать) хăйĕн «Эпир Сталина хисеплетпĕр» ятлă умстатьинче çапла калать: «Пирĕн вăхăтри чи паллă та чи мала тухнă деятельсенчен пĕрин сăмахĕсене итлесе ĕçлер, мĕншĕн тесен вăл чăн-чăн çулпуç пулмашкăн тивĕçлĕ правăна çĕнтерсе илнĕ».

Анкарари судра „Папен çине тапăнни“ текен ĕçе пăхса тухни

АНКАРА, апрелĕн 30-мĕш. (ТАСС). Анкарари суд «Папен çине тапăнни» текен ĕçе малалла пăхма тытăннă. Ĕнерхи каçхи ларура свидетельсенчен ыйтнă; çав свидетельсене суда прокурор ыйтнипе чĕннĕ, вĕсене совет граждăнĕсем Павловпа Корнилов юлташсем Абдурахманпа Сулейман провокаторсемпе çыхăну тытнă тесе кăтартса пама чĕннĕ.

Пĕр Селями ятлă çын, бомба çурăлса кайнă чух вилнĕ Омерпа пĕр общежитире пурăннăскер, Омерпа Абдурахман «коммунистсем» пулнă тенине, судăн иртнĕ ларăвĕсенче суяна тухнăскере тепĕр хут кăларса тăратма хăтланать, вăл çапла калать: вĕсем «коммунистла пропаганда туса пурăннă», тет. Анчах та Павловпа Корнилов çине тăрса панă ыйтусем хыççăн свидетель хăй çавăн пек каланине каялла илет те çапла калать: Омерпа Абдурахман хальхи событисем çинчен хаçат материалĕсем тăрăх çеç сӳтсе-явнă, тет. Судья: вĕсем ютçĕршыв çыннисемпе калаçнине эсĕ курнă-и, тесе ыйтнине хирĕç: курман тесе ответлет. Селями калани пăтрашуллă пулни çакăнтан курăнать: вăл, сăмахран, Омер Измира çак çулти мартра кайнă, тет, урăхла каласан, Омер хăй вилнĕ хыççăн кайнă пулать. Павлов судран хăй апрелĕн 15-мĕшĕнче калама тытăннине малалла калама ирĕк пама ыйтать тата çакнашкал факта протокол çине çырса хума ыйтать: уголовно процессуальнăй кодекс тăрăх судăн айăпланакан çынсенчен ыйтнă хыççăн тин свидетельсенчен ыйтмалла, суд халь çав кодекса шăсать, тет. Суд çак факта протокол çине çырса хурать. Корнилов иртнĕ ларура Кыркор свидетеле медицина енчен экспертиза тума ыйтнă пулнă (çав свидетель Омера Корнилов патĕнче куртăм тесе каланă, анчах вăл судра хăйне ăсран тайăлнă çын пек кăтартнă); суд çавăн пек экспертиза тума кирлĕ мар тенĕ.

АНКАРА, майăн 1-мĕш. (ТАСС). Ĕнерхи ларура Павлов çапах та хăйне малалла калама тата Абдурахманпа Сулеймана ыйтусем пама ирĕк илнĕ, Павлов, уйрăмăн илсен, Абдурахман каланинчи çакăн пек хирĕçӳлĕхсене ăнлантарса пама ыйтать: Абдурахман мартăн 3-мĕшĕнче: Сулейман Папена «тапăнма» хатĕрленни çинчен пĕлмен, тесе каланă, мартăн 4-мĕшĕнче вара — пĕлнĕ, тесе калаçа хунă; мартăн 3-мĕшĕнче Абдурахман çапла каланă: Сулейман турокла калаçакан пĕр вырăспа çеç паллашнă, тенĕ; мартăн 4-мĕшĕнче: Сулейман Павловпа та паллашнă, тенĕ; Павлов — турокла калаçма пĕлмест. Абдурахман çапла калать: Павловпа эпĕ 1941 çулти сентябрьте паллашрăм, тет, анчах та Павлов Турцие пуçласа октябрĕн варринче кăна килнĕ; Абдурахман допросра çапла каланă: Сулейман çак преступление «хăйшĕн тăрăшса çеç» хутшăннă, тенĕ.

Абдурахман каланинче çавăн пек хирĕçӳлĕхсем пуррине прокурор тунма хăтланать, Павлов ăна лайăх вуласа тухман, тет. Суд Абдурахмана Павловăн ыйтăвĕсем çине ответлеме хушсан, Абдурахман пĕр йĕркеллĕ сăмах та калаймасть.

Павлов тата Сулеймана ыйтусем парать. Сулейман вĕсем çине ответлеме килĕшмест, эпĕ вĕсем çинчен малтанхи следствире каланă, тет. Павлов кун пирки çапла калать: следствин протоколĕсенче çырса хунисене ĕнтĕ Сулейман каланă сăмахсем тесе калама çук, ăна ыттисем каласа панă сăмахсем темелле, çавăнпа та халь судра Сулейман, атăшса каяс мар тесе, çăвар уçма та хăрать. Сулейман ответлеме килĕшменнине, Павлов ыйтнипе, суд протокол çине çырса хурать.

Абдурахманăн защитникĕ Павлова провокациллĕ темиçе ыйту парать. Павлов вырăнти вăрттăн организацисен протоколĕсемпе интересленнипе интересленменни çинчен, вăл Маяковскипе Есенинăн произведенийĕсемпе интересленнипе интересленменни çинчен ыйтать. Павлов тивĕçлипе ответлет.

Прокурор Абдурахмана тӳрре кăлармашкăн тăрăшнă май тата Абдурахманăн защитникĕ Павлова варалама тăрăшнă май Павлов çапла калать: «Эпĕ çак процесра мĕн пулса иртнине ăнланса илейместĕп вара: мĕншĕн-ха кунта прокурор защитникăн ĕçне тăвать, защитник—прокурорăн ĕçне тăвать?» тет. Залра ларакансем çеç мар, судья та вара йăл кулса илет.

—□—

Пĕлтерӳ

Паян, майăн 5-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре Советсен çуртĕнчи ларусен залĕнче партипе совет тата рабселькорсен Шупашкарти активĕн большевикла пичет кунĕ ячĕпе туса ирттерекен пухăвĕ пулать.

Пухура «Красная Чувашия» хаçат редакторĕ Вишняков юлташ «Большевикла пичетĕн вăрçă условийĕсенчи задачисем» çинчен доклад туса парать.

Пухăва кĕмелли билетсене хула комитетĕнче илмелле.

ВКП(б) Хула Комитечĕ, «Красная Чувашия» тата «Чăваш Коммуни» хаçатсен редакцийĕсем.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

КОЗЛОВСКИЙ КОМБИНАТ
на Волге принимает в распиловку лес в неограниченном количестве от организаций и колхозов. Возможно с последующей обработкой (стружка, шпунтовка).
Телеграфный адрес:
Козловка ЧАССР Волга.
ЗАВОДОУПРАВЛЕНИЕ.

Стена хаçачĕсен ĕçне вăйлатассишĕн

Хаçат большевиксен партийĕн историйĕнче яланах пысăк вырăнта тăнă. Хаçат — коллективлă агитатор, коллективлă пропагандист, коллективлă организатор. Вăл малта пыракан стахановецсен, ударниксен, отличниксен паха ĕçĕсемпе паллаштарать, ыттисене мала тухма пулăшать, ĕççыннисем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн та таранăн сарса яма пулăшать.

Эпир кунта уйрăмăнах шкулсенчи стена хаçачĕсем çинчен чарăнса тăрасшăн.

Вĕренӳпе воспитани ĕçĕнче стена хаçачĕ çавтери пысăк пулăшу пани çинчен эпĕ хамăн педагогикăллă опыта кăтартса парасшăн.

1940—1941 вĕренӳ çулĕнче эпир Красноармейскри вăтам шкулти стена хаçачĕсен ĕçне нихăçанхинчен те аванрах майласа ятăмăр. Вĕренӳ çулĕ пуçлансанах классенчи, пионер отрячĕсенчи стена хаçачĕсене йĕркелесе ярасси çинчен парти, комсомол, профсоюз организацийĕсенче, педагогика совечĕн ларăвĕнче, вĕренекенсен конференцийĕнче, пионер отрячĕсен сборĕсенче сӳтсе-явса решенисем йышăнтăмăр. Редколлеги членĕсене суйланă чух вĕсене пур енчен те çирĕп наказсем парса хăвартăмăр. Ун хыççăн партин пуçламăш организацийĕпе профсоюз организацийĕ çумĕнче «Коммунистла çутĕçĕшĕн», комсомолпа пионерсен тата вĕренекенсен организацийĕсем çумĕнче «Отличник» стена хаçачĕсем йĕркеллĕ тухма пуçларĕç. Кусемсĕр пуçне тата классенче, пионерсен отрячĕсенче стена хаçачĕсем тухма тытăнчĕç. Вĕренӳ çулĕ вĕçленичченех «Коммунистла çутĕçĕшĕн» — 17, «Отличник» — 15 номер тата классемпе пионер отрячĕсенче пурĕ 198 номер стена хаçачĕ тухрĕ. Вĕренекенсем хаçат ĕçне çавтери юратакан пулчĕç, хаçатăн авторитечĕ ӳсрĕ, корреспондентсен шучĕ темиçе хут нумайланчĕ. Вĕренекенсем литература кружокĕ организацилесе 4 номер «Хунав» ятлă журнал кăларчĕç.

Стена хаçачĕсен авторитечĕ хăпарасси çаксенчен килчĕ:

1. Кашни хаçат редколлегин членĕсене, пуринчен ытла редакторĕсене, чи дисциплинăллă отличниксене, ударниксене пысăк авторитетпа усă куракан вĕренекенсене суйларăмăр.

2. Парти, комсомол, профсоюз организацийĕсен пухăвĕсенче час-часах редакторсен отчечĕсене итлесе, вĕсене час-часах кăтартусем парса пытăмăр. Кашни уйăхрах вĕсемпе канашлусем, семинарсем туса ирттертĕмĕр. Унта вĕсем пĕр-пĕрин опычĕсемпе паллаштатчĕç, пĕр-пĕрне критикăлатчĕç, кăтартусем парса хăваратчĕç.

3. Уйăхра пĕр хутран кая мар хаçата çырса тăракансемпе те канашлусем, семинарсем ирттереттĕмĕр тата хаçата мĕн çинчен мĕнле çырмаллисене вĕрентеттĕмĕр. Ачасем семинарсемпе питĕ интересленетчĕç.

4. Стена хаçачĕ çине тухнă заметкăсене класри вĕренекенсен пухăвĕсенче, учком ларăвĕнче, пионерсен сборĕсенче сӳтсе-яваттăмăр. Çитменлĕх çинчен хаçатра тухнă заметкăсем нихăçан та сӳтсе-явмасăр юлман. Вăл хаçатăн авторитетне хытă хăпартрĕ.

Стена хаçачĕсем лайăх та илемлĕ тухса тăни ачасен вĕренӳпе воспитани ĕçне çулти вырăна лартма нумай пулăшрĕ. Стена хаçачĕсем пурте отлично вĕренессишĕн кĕрешрĕç, социализмлă ăмăрту мĕнле пурнăçланнине çутатса пычĕç. Отличниксен, ударниксен опычĕсене çутатса пынипе пĕрлех, юлса пыракансене хытă критикăларĕç. Çапла майпа ачасен вĕренĕвĕ самаях ӳсрĕ, куллен-кун çитĕнӳ туса пытăмăр. Вĕренӳ çулĕн пĕрремĕш чĕрĕкĕнче пирĕн шкулта 17 отличник, 63 ударник кăна пулнă, вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайманнисен шучĕ 89 ачана çитнĕччĕ. Вĕренӳ çулĕ вĕçленнĕ вăхăта пирĕн отличниксен шучĕ 47 ачана, ударниксем 115 ачана çитрĕç. Çапла вара 47 ача аслă класcене хисеплĕ грамотăпа куçрĕç. Кунта пире стена хаçачĕсем нумай пулăшу пачĕç.

Стена хаçачĕсем уйрăмăнах ачасен дисциплинине юсама пулăшаççĕ. Паллах, ку тĕлĕшпе заметкăсене питĕ лайăх пĕлсе, асăрханса çырмалла. Ачасене критикăлассине вĕсен психологине пĕлсе тумалла.

Уйрăмăнах вырăнти шкултан вĕренсе тухнă çынсен, хальхи вăхăтра аслă университетсенче, институтсенче вĕренекен студент-отличниксен, Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флотри боецсен командирсемпе политработниксен çырăвĕсем ачасене хавхалантараççĕ, отличнă вĕренме пулăшаççĕ, дисциплинăна хăпартаççĕ. Эпир ун пек çырусене иртнĕ çулта 56 çыру стена хаçачĕсене кĕртнĕ.

Шкулти стена хаçачĕсем ачасене, дисциплинăллă пулма вĕрентнисĕр пуçне, обществăллă ĕçсене явăçтарма, кружоксен ĕçĕсене чĕртсе яма пулăшаççĕ. Пирĕн шкулта иртнĕ вĕренӳ çулĕнче тĕрлĕрен кружоксем аван ĕçлесе пычĕç. 40 ача фотокружокран вĕренсе тухрĕ. Çакăн пекех авиамоделистсен, çамрăк натуралистсен, топографи, литература, истори, географи, драма, хор кружокĕсем аван ĕçлерĕç. Оборона кружокĕсем лайăх ĕçленипе, пирĕн шкулта 7-мĕш класран пуçласа 10-мĕш класа çитиччен икшер оборона значокĕнчен кая илни çук, нумайĕшĕн 3—4 оборона значокĕ пур. Стена хаçачĕсем çуракине хатĕрленес ĕçре те колхозсене сахал мар пулăшу пачĕç. Пирĕн ачасем, шкулти стена хаçачĕсенчен пример илсе, çуллахи вăхăтра хăйсен колхозĕсенче лайăх та илемлĕн стена хаçачĕсем кăларса тăчĕç.

Анчах хăшпĕр шкулсенчи учительсем стена хаçачĕпе сахал интересленеççĕ. Мартынкассинчи туллимар вăтам шкулта сентябрь уйăхĕнчен пуçласа та пĕр номер анчах кăларнă, икĕ статья кăна кĕртнĕ. Çакăн пирки шкулта стена хаçачĕ мĕн иккенне ăнланман ачасем те пур. Шкулĕнче таса мар, вĕренӳ ĕçĕ те начар.

Хаçат пысăк политикăллă содержанипе, илемлĕ тухса тăмалла. Статьясем ытла пысăк пулмалла мар. Хаçата илемлĕ, таса почеркпа, илемлĕ картинăсемпе кăларса тăмалла. Шкулсенчи стена хаçачĕсен лайăх опычĕсене ялсоветсене, колхозсене, бригадăсене, фермăсене сармалла. Колхозсенче тухакан стена хаçачĕсене учительсен те активлăн хутшăнса, политика, экономика, ялхуçалăх, культура ыйтăвĕсемпе час-часах çырса тăмалла, вĕсен колхозниксене ăсаннă ыйтусем тăрăх ăнлантарса памалла. Çавăн пекех колхозсемпе советсенче тухакан стена хаçачĕсене çырса тăма агрономсене, медицина работникĕсене, ялсенчи мĕнпур культурăллă вăя хутшăнтармалла. Ку ĕçе партипе комсомолăн пуçламăш организацийĕсен пуçарса ертсе пымалла. Вĕсен ăна тĕрĕслесе те тăмалла. Партипе комсомолăн райкомĕсен стена хаçачĕсен ĕçĕсене тĕрĕслесе, вĕсен редакторĕсен отчечĕсене итлемелле. Хаçат редакторĕсен семинарĕсене, канашлăвĕсене туса ирттермелле. Райкомсем енчен хаçат редакторĕсене яланах пулăшса пымалла. Паянхи пичет кунĕ стена хаçачĕсен ĕçне вăйлатса ярас тĕлĕшпе пысăк пулăн йышăнса тăмалла.

Г. ТОМАСОВ.
ВКП(б) Красноармейски райкомĕн секретарĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 764 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260.